24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ФЕВРАЛЬ 14 ШАМАТКУН 38(6063) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖ ХАҪАЧӖ.

Партин ҫӗнӗ кадрӗсене куллен вӗрентсе, ӳстерсе пымалла

Большевиксен партийӗ тата унӑн Центральнӑй Комитечӗ ҫӗнӗ кадрсене ҫитӗнтерсе воспитани парас ӗҫе яланах пысӑк вырӑна хунӑ, вӑл ӗҫе тимлӗн туса пынӑ. Халӗ, Германи фашисчӗсене хирӗҫ пыракан отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, партин ҫӗнӗ кадрӗсене ҫитӗнтерсе, вӗрентсе пырассине уйрӑмах тимлӗн туса пымалла. Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче ҫӗршер пин коммунистсем нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ хӗрӳллӗн ҫапӑҫаҫҫӗ. Партин Чӑваш республикинчи организацийӗнчен те чылай коммунистсем, парторганизацисен руководителӗсемпе ытти работникӗсем алла хӗҫпӑшал тытса ҫӗршыван ирӗклӗхӗпе чыслӑхне сыхлама фронта кайрӗҫ.

Фронта кайнӑ юлташсем вырӑнне ҫӗнӗ кадрсем тӑчӗҫ. Партин организацийӗсене ертсе пырас ӗҫе те сахал мар ҫӗнӗ кадрсем килчӗҫ. Халӗ, вӑрҫӑ фрончӗсенче хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра, тыл фронта пур енӗпе те вӑйлӑн пулӑшса тӑмалла, пӗтӗм хуҫалӑх ӗҫне фронт интересӗсемшӗн, тӑшмана хӑвӑртрах пӗтерсе тӑкассишӗн туса пымалла. Ҫулпуҫ Сталин юлташ фронта тыл мӗнле пулӑшса тӑмаллине тата ку тӗлӗшпе парти организацийӗсем тумалли ответлӑ задачӑсене витӗмлӗн палӑртса пачӗ. Сталин юлташӑн историллӗ кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырас тесе, партин ҫӗнӗ кадрӗсем ҫӗнӗ вӑйпа, хастарлӑн ӗҫе тытӑнчӗҫ.

Партин Улатӑр райкомӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа партипе совет активне 135 ҫынна пысӑкрах ӗҫе лартнӑ. Ҫӗнӗ работниксем ӗҫе ҫӗнӗ вӑй илсе кӗчӗҫ, нумай ҫӗрте парти организацисен ӗҫӗ лайӑхланса ҫӗнелчӗ, вӗсем хӑйсен ӗҫне юратса туса пыраҫҫӗ. А. Разумовская юлташ халӗ ВКП(б) райкомӗн инструкторӗ пулса ӗҫлет. Вӑл хӑйӗн ӗҫне тӑрӑшса тӑвать, ӗҫе вӗренсе ҫитме тӑрӑшать, уйрӑм коммунистсен ӗҫӗсене пӗлсе тӑрать, вӗсене ӗҫе организацилеме пулӑшать. Вӑрҫӑччен учительница пулса ӗҫленӗ коммунистка А. Лычагина халӗ вӑтам шкул директорӗ пулса ӗҫлет. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Новинскри Сталин ячӗпе тӑракан колхозри парторганизаци секретарӗ пулма А. Исачкин юлташа суйланӑ. А. Исачкин юлташ парти организацине ертсе пырас ӗҫре ҫӗнӗ ҫын. Апла пулсан та, вӑл ӗҫе хӑвӑрт хӑнӑхса пырать, парти организацин ӗҫне колхоз производствипе ҫирӗппӗн ҫыхӑнтарса, колхозниксен массине хавхалантарса пырать.

Ҫӗнӗ кадрсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫе большевикла тимлӗхпе, пултаруллӑн туса пыраҫҫӗ. Нумайӗшӗ вӗсенчен татах та ответлӑрах, пысӑкрах ӗҫсене куҫма та тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Улатӑр станцийӗнчи депо машинисчӗ И. Вильдяев юлташа вӑрҫӑ пуҫлансанах депо диспетчерӗн ӗҫне шанса панӑ. И. Вильдяев юлташ хӑйӗн ӗҫне тивӗҫлипе туса пычӗ. Ҫакна шута илсе ВКП(б) райкомӗ И. Вильдяев юлташа халӗ пысӑкрах ӗҫе уйӑрса лартрӗ.

Сталин юлташ кадрсене тӑрӑшса ӳстерме хушать, работниксемпе чӑтӑмлӑн «аппаланма» тата вӗсем ӳсессине васкатма вӑхӑта шеллемесӗр ӗҫлеме вӗрентет. Сталин юлташ вӗрентнине тӗп вырӑна хурса ӗҫлесе, пирӗн республикӑри парторганизаци ҫак иртнӗ 5—6 уйӑх хушшинче пултаруллӑ ҫӗршер кадрсене ертсе пырас ӗҫе лартрӗ. ВКП(б) райкомӗсен кадрсем енӗпе ӗҫлекен пайӗсем хӑйсен ӗҫне нумай хут вӑйлатрӗҫ. Фронта кайнӑ юлташсем вырӑнне ҫӗнӗ кадрсем суйласа лартас тата вӗрентсе пырас ӗҫе ВКП(б) райкомӗсем чылайӗшӗ лайӑх туса пыраҫҫӗ. Анчах кадрсене тӗрӗс суйласа илес, пӑхса ҫитӗнтерес, вӗсене пысӑкрах ӗҫе лартас, вӗсене тунӑ ӗҫ тӑрӑх тӗрӗслесе пырас ӗҫсене ВКП(б) хӑшпӗр райкомӗсем тимлӗн туса пымаҫҫӗ-ха.

ВКП(б) Сӗнтӗр райкомӗ кадрсемпе уйрӑмах ҫителӗксӗр ӗҫлет. Райкомӑн кадрсем енӗпе ӗҫлекен отделӗ хӑйӗн ӗҫне ансӑр ӑнланать. Ҫӗнӗ кадрсене вӗсен ӗҫӗ тӑрӑх сӑнаса, тӗрӗслесе пымасть, вӗсене вӗрентмест. Партин пуҫламӑш организацийӗсен ҫӗнӗ секретарӗсене пухса организацин шалти ӗҫне йӗркелесе пырас ыйтусемпе пӗр семинар та, канашлу та туса ирттермен. Ҫакна пула вара хӑшпӗр колхозсенчи пуҫламӑш организацисенче 2—3 уйӑх хушши пухусем пулса иртмеҫҫӗ. Партин Мӑркавӑш ялсоветӗнчи территориальнӑй организацийӗ иртнӗ ҫулти октябрь уйӑхӗнчен вара пӗр пуху та туса ирттермен, организацинчи коммунистсем Сталин юлташ 1941 ҫулӑн ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ историллӗ доклада сӳтсе-явса вӗренмен. Хӑшпӗр коммунистсем, ҫав шутрах парторганизацин секретарӗ Морозов юлташ та, хаҫатсем ҫырӑнса илмеҫҫӗ, вуламаҫҫӗ.

ВКП(б) Сӗнтӗр райкомӗн кадрсене суйласа илес ӗҫе те лайӑхлатмалла. Унӑн кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарӗн Ефремов юлташӑн ҫӗнӗ кадрсемпе ӗҫлессине тӗпренех улӑштарса ҫӗнетмелле, вӗсемпе куллен ҫыхӑнса тӑрса вӗрентсе пымалла.

Шупашкар хулинчи пристаньри парторганизацин секретарӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа виҫӗ хут улшӑннӑ ӗнтӗ. Халӗ парторганизацин секретарӗ пулса Исаков юлташ ӗҫлет. Вӑл парти организацине ертсе пырас ӗҫре халиччен пулман. Ӑна ӗҫре ҫирӗп пулӑшу кирли паллах. Ҫапла пулсан та, ВКП(б) хула комитечӗ енчен вӑл тивӗҫлӗ пулӑшу илеймест-ха.

ВКП(б) хула комитечӗн инструкторӗсем, хулари организацисенче час-часах пулаҫҫӗ пулсан та, партин ҫӗнӗ кадрӗсене организацири ӗҫе йӗркелеме сахал пулӑшаҫҫӗ, нумай чухне вӗсем пырса калаҫса кайнипех лӑпланаҫҫӗ.

Ҫӗнӗ кадрсене воспитани парас ӗҫре вӗсем хушшинче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе кирлӗ пек туса пыни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫакна пирӗн районсенчи парторганизацисен тӑтӑшах организацилесе иртнтермелле. Парти организацийӗсен ҫӗнӗ секретарӗсене партиллӗ ӗҫӗн техникине вӗрентмелле, парти организацин хуҫалӑхне тӗрӗс организацилеме вӗрентмелле.

Парти райкомӗсен, партин вырӑнсенчи пуҫламӑш организацийӗсен, ҫӗнӗ кадрсене воспитани парса, вӗрентсе пырса, вӗсене нимӗнле ӗҫрен те хӑраман, кирек мӗнле йывӑрлӑха та сирсе яма пултаракан, йывӑрлӑхсене чӑтӑмлӑн кӗрешсе сирме пултаракан, тӑван ҫӗршыван ирӗклӗхӗпе чысӗшӗн, Ленин — Сталин ӗҫӗшӗн вӗсне ҫитиех кӗрешме хатӗр тӑракан руководительсем пулма вӗрентсе ӳстермелле.

Чугунҫула лайӑх пӑхса тӑратпӑр

Пирӗн станци коллективӗ отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче мӗн вӑй ҫитнӗ таран лайӑхрах ӗҫлеме тӑрӑшать. Эпир хамӑр ҫине чугунҫула лайӑх пӑхса тӑма, поездсене йӗркеллӗ, пӗр чарӑнусӑр хӑвӑрт ҫӳретме, пӗр браксӑр, простой тумасӑр ӗҫлеме обязательство илнӗ.

Коллектив хӑйӗн обязательствисене большевикла пурнӑҫа кӗртсе пырать. Ку таранччен пирӗн ӗҫре брак е поездсене простой тутарни пулман, чугунҫула кирек мӗнле ҫанталӑкра та лайӑх тытатпӑр.

Юлашки вӑхӑтра пирӗн хушӑра отличниксен хисепӗ те ӳссе пырать. Станци дежурнӑйӗ коммунист С. Поталов чугунҫул ҫинче чылайранпа ӗҫлет ӗнтӗ, унӑн ӗҫӗнче нихӑҫан та ҫитменлӗх пулман. Вӑл поездсене йышӑнса ӑсатас тӗлӗшпе пример кӑтартать, отличнӑ ӗҫлет.

Старший стрелочник И. Бочковпа стрелочница А. Смирнова юлташсем те хӑйсен участокӗнчи ҫула тата стрелка хуҫалӑхне отлично тытаҫҫӗ. Лайӑх ӗҫленӗшӗн вӗсене ҫул управленийӗ пӗрре кӑна мар тав тунӑ.

Поездсене йӗркеллӗ ҫӳретес тӗлӗшпе дежурнӑй И. Зубавин юлташ та начар мар ӗҫлет, вӑл дежурнӑй чухне нимӗнле чӑрмавсем те пулмаҫҫӗ.

Чугунҫул транспорчӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн помощникӗ пулса тӑрать. Ҫакна пирӗн рабочисем лайӑх ӑнланса илнӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем пӗтӗм вӑя, пултарулӑха хӑйсене шанса панӑ ответлӑ та хисеплӗ ӗҫе тивӗҫлӗн пурнӑҫлама ҫӗре пама тӑрӑшаҫҫӗ.

С. ШАПКОВ.
Ҫӗмӗрле станцинчи пуҫламӑш парторганизацин секретарӗ.

Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑларнӑ районсенчи шкулсем валли кӗнекесем

Нимӗҫ захватчикӗсем хӑйсем вӑхӑтлӑха йышӑнса илнӗ районсенче пӗтӗмпех ҫунтарса, ҫӗмӗрсе пӗтереҫҫӗ. Вӗсен шутӗнче темӗн чухлӗ шкулсем, темӗн чухлӗ шкул пурлӑхӗсем арпаннӑ.

Халь Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсене хамӑрӑн ҫӗр ҫинчен хӑваласа кӑларса пырать. Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенче пурнӑҫ ҫӗнӗрен пуҫланать. Шкулсем ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Вӗренекенсем валли кӗнекесем, кӑрандашсем, перосем кирлӗ, Ҫавӑнпа Горький хулинчи шкулсенче вӗренекенсем Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑларнӑ районсенчи шкулсем валли кӗнекесем ярса парас ӗҫе пуҫарчӗҫ. Ку пуҫару ҫумне пирӗн республикӑри шкулсем те хутшӑнчӗҫ.

Ядринӑри вӑтам шкулта вӗренекенсем пурӗ 50 тенкӗлӗх учебниксем пухнӑ. Уйрӑм ачасем: П. Краснов 35 тенкӗлӗх, Я. Захаров—35 тенкӗлӗх, Ф. Тимофеев—25 тенкӗлӗх кӗнекесем пачӗҫ.

И. КУДРЯШОВ.

Ҫураки валли тракторсем юсас тӗлӗшпе пысӑк тухӑҫлӑхпа тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) Ишлей райкомӗпе ӗҫсынни депутачӗсен районри Совечӗн исполкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

Ишлей машинно-тракторнӑй станцине (МТС директорӗ **П. В. Васильев** юлташ, политотдел начальникӗ **А. С. Степанов** юлташ, старший механик **Кириллов** юлташ). Тракторсем юсас плана февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарнӑ; 16 трактора тӗппрен юсанӑ, 24 трактора текущи ремонт тунӑ тата 17 трактора техника енчен лайӑх пахалӑхпа пӑхса тӗрӗслес тухнӑ.

Тракторсене юсас тӗлӗшпе уйрӑмах трактор бригадисен бригадирӗсем **И. Н. Романов, Н. И. Елахов, Т. Е. Ефимов, К. С. Мазяров** тата трактористсем **П. Астраханцева, М. Ванеев, Н. Е. Елахов** лайӑх ӗҫленӗ.

Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе пысӑк тухӑҫлӑхпа тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗҫсынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

1. Вӑрмар районӗнчи **«Красные Мураты»** колхоза (колхоз председателӗ **Илларионов** юлташ). Ҫураки валли колхоз вӑрлӑх хатӗрлесе ҫитернӗ, сеялкӑсене, плугсене, ҫӳресене, лаша таврашӗпе ытти ӗҫ хатӗрӗсене юсаса пӗтернӗ. Колхоз вырӑнти удобренисем ҫакӑн чухлӗ пухнӑ: кӗл—25 центнер, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ—11 центнер, минераллӑ удобренисем турттарса килсе хатӗрленӗ, уя 600 лав тислӗк кӑларнӑ. Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе колхозра малти вырӑна **Ефремов** юлташӑн 4-мӗш №-лӗ бригади тухнӑ.

2. Елчӗк районӗнчи **Крупская** ячӗпе тӑракан колхоза. Вӑрлӑхпа страховка фончӗсене уйӑрса хурас тӗлӗшпе пур культурӑсем тӑрӑх та плана тултарнӑ. Вӑрлӑха тасатса, акма юрӑхлӑ кондициллӗ тунӑ. Ялхуҫалӑх машинисене юсаса пӗтернӗ: 37 плуг, 6 сеялка, 24 ҫӳре тата 4 культиватор юсанӑ. Агротехника тӗлӗшпе хӗлле тумалли мероприятисене пурне те пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Ҫуракине большевикла хатӗрленер

Чкаловски МТС тракторсене юсаса ҫитернӗ

«ВКП(б) Обкомне

Тракторсен кӗркуннехипе хӗллехи юсавне февралӗн 1-мӗш тӗлне пӗтӗмпех туса ҫитертӗмӗр. Мӗнпурӗ 10 трактора тӗппрен юсанӑ тата 25 трактора текущи ремонт тунӑ.

Чкаловски МТС».

* * *

Нумаях пулмасть, Ишлей МТС-ӗ тракторсене юсаса пӗтерни ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Паян эпир Чкаловски МТС хӑйӗн тракторӗсене февралӗн 1-мӗш тӗлне юсаса ҫитерни ҫинчен ВКП(б) Обкомне пӗлтернине пичетлесе кӑларатпӑр.

Ҫак икӗ паха тӗслӗх ҫуракине чӑн та большевикла хатӗрленсе пыни ҫинчен, унтан та ытларах, пирӗн МТС-семпе колхозсем ҫуракине пур енчен те тӗплӗн хатӗрленсе ҫитме пултарни ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Ишлей МТС-ӗ иртнӗ ҫулсенче начар ӗҫлекен МТС-сен шутӗнче тӑнӑ. Кӑҫалхи ҫулӑн уйрӑмлӑхӗсене шута илсе, МТС хӑйӗн умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлама нихӑҫанхинчен те тимлӗрех тытӑнчӗ. Иртнӗ ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӗҫленӗ хыҫҫӑн МТС нимӗнрен малтан хӑйӗн тракторӗсене юсама тытӑнчӗ. Ку ӗҫре МТС коллективӗ, уйрӑмах трактористсемпе механиксем чӑн-чӑнах фронтри пек ӗҫлерӗҫ. Чи лайӑх ӗҫлекен трактористсенчен Григорьев, Астраханцев, Ванеев юлташсене палӑртса хӑвармалла. Асӑннӑ юлташсем тата трактор бригадисен бригадирӗсем — Романов, Мазяров, Ефимов юлташсем—МТС мастерскойӗнче ырми-канми ӗҫлесе, хӑйсен кулленхи ӗҫ нормисене ирттерсе тултарса пычӗҫ. Ҫапла вара, МТС февралӗн 1-мӗш тӗлне пурӗ 40 трактор юсарӗ. Ҫак шутран 16 трактора тӗппрен юсанӑ.

Чкаловски МТС-ре те тракторсем юсас ӗҫе, Ишлей МТС-ӗнчи пекех, тӗрӗс организацилесе ӑнӑҫлӑн туса пычӗҫ. Чкаловски машинно-тракторнӑй станци те хӑйӗн тракторӗсене кӗркуннех юсама тытӑнчӗ. Тракторсене юсама пур трактористсене те явӑҫтарнӑ, ҫитмен кадрсене—слесарьсемпе тимӗрҫӗсене—вӑхӑтра тупнӑ. Тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене юсама ятарласах уйрӑм бригадӑсем организациленӗ. Вӗсем пурте пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫленӗ. Ҫапла ӗҫе пуҫарса янӑ хыҫҫӑн тракторсем юсас ӗҫ МТС мастерскойӗнче кунӗн-ҫӗрӗн вӗрсе тӑчӗ. Тракторсене юсама кирлӗ трактор пайӗсене ҫӗнӗрен тумаллисене турӗҫ, ҫӗнетмеллисене ҫӗнетрӗҫ. Ку ӗҫе старши механик Северов юлташ пултаруллӑ ертсе пычӗ. Тракторсен пайӗсене ҫӗнӗрен тӑвас е ҫӗнетес тӗлӗшпе никамран лайӑх Кузнецов токарь ӗҫлерӗ. Вӑл хӑйӗн кашни кунхи ӗҫ нормине ялан планран ирттерсе тултарса пычӗ.

Тракторсем юсас ӗҫре ӑмӑртакан бригадӑсенчен Коновалов бригади хӑйне палӑртрӗ. Унӑн бригади хӑйӗн тракторӗсене никамран малтан—иртнӗ ҫулти декабрӗн 1-мӗш тӗлне юсаса пӗтерчӗ. Трактористсенчен Андреева, Константинова, Кураков юлташсем, хӑйсен ӗҫӗсене кӑтартуллӑн туса пырса, тракторсене чи малтан юсаса ҫитерчӗҫ. А. Андреева юлташ хӑйӗн тракторне юсаса пӗтернӗ хыҫҫӑн комбайн юсама пуҫларӗ. Тракторсене юсас ӗҫре МТС директорӗ Архипов юлташ хӑй те питӗ тӑрӑшрӗ, механиксене, трактористсене куллен пулӑшса пычӗ, тракторсене мӗнле юсанине хӑй тӗрӗслесе тӑчӗ.

Ҫапла Чкаловски МТС те хӑйӗн тракторӗсене февралӗн 1-мӗш тӗлне пӗтӗмпех юсаса ҫитерчӗ.

Халӗ МТС-ра ытти ялхуҫалӑх машинисене тимлӗн юсаҫҫӗ. МТС коллективӗ ялхуҫалӑх машинисене пурне те Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне юсаса ҫитерессишӗн тӑрӑшса ӗҫлет, бригадӑсем пурте пӗр-пӗринпе ӑмӑртаҫҫӗ.

Акара пӗрле апатланмалла пулать

КАЛИНИНО. Сӑкӑт ялсоветне кӗрекен колхозсенче халӗ ҫуракине хӗрсех хатӗрленеҫҫӗ. Ҫӗньял Явӑшри колхоз председателӗ Т. Федоров ҫак кунсенче Вӑрнартан тӗрлӗ удобренисем кӳрсе килтерчӗ, вӑрлӑхсене ку колхозра уйрӑм бригада сортлать. Паянхи куна ҫитсе вӑрлӑхсене 110 центнер тасатнӑ.

Сӑкӑт ялӗнчи тимӗрҫӗ лаҫҫи кашни кун уҫӑ. Унта И. Воробьевпа А. Прокопьев тимӗрҫӗсем ирттен пуҫласа каҫчен канмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ӗҫ нормисене куллен 200—250-шар процент тултараҫҫӗ. Вӗсем тӑрӑшса ӗҫленипе «Ҫӗньял» колхоз 20 плуг, 5 сеялка, 1 культиватор, 20 ҫӳре, 50 урапа юсама пултарчӗ. Сӑкӑт ялӗнчи колхоз та хӑйӗн ялхуҫалӑх машинисене юсаса ҫитерчӗ.

Ҫураки вӑхӑтӗнче кӑҫал та апат-ҫимӗҫ пӗрле пулать тата яслисем те пулмалла. Ҫӗньял Явӑшри колхоз ака ҫинче пӗрлешӳллӗ апатланас ӗҫе организацилеме 10 центнере яхӑн тырӑ уйӑрчӗ.

Г. МАТВЕЕВ.

Куҫса килнӗ ачасене пулӑшаҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Фронт ҫывӑхӗнчи районсенчен тылри районсене вӗренекен ачасем чылай куҫса килкӗ. Паллах, вӗсене пулӑшу кирлӗ. Унсӑр пуҫне ашшӗсем, пиччӗшсем тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ ачасем те сахал мар. Эпир вӗсене те пулӑшма тивӗҫлӗ. Пирӗн куҫса килнӗ ачасене, Хӗрлӗ Ҫара кайнисен ачисене шкулта вӗренме условисем туса памалла. Вӗсене ӑшӑ тумтирсем, ҫимелли япаласем, кӗнекесем илсе парса пулӑшни тылри ӗҫсыннисен пат, нотла ӗҫӗ пулса тӑрать.

Мамӑш туллимар вӑтам шкулӗнчи учительсем тата колхозниксем куҫса килнӗ, Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ семьери ачасене ӑшӑ тумтирсем, кӗнекесем илсе парса пулӑшаҫҫӗ.

Учительсем ачасене 2 ҫӗлӗк, пӗр мӑшӑр ҫӑмата, пӗр пальто, 6 мӑшӑр ҫӑм чӑлха, пӗр шарф, 4 кӗпе пачӗҫ. Кунсӑр пуҫне 135 тенкӗ укҫан пухнӑ.

«17-мӗш партсъезд» колхоз ачасем валли 5 пат тырӑ уйӑрса панӑ.

Чурачӑк ялсоветӗнчи Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхоз 3 центнер тырӑ парса пулӑшнӑ.

А. НИКОЛАЕВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 12-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Февралӗн 12-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем, противника хирӗҫ вӑйлӑн ҫапӑҫса, малалла куҫнӑ тата халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗҫ войскисем техника енӗпе, уйрӑмах чӗрӗ вӑй енӗпе пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ.

Февралӗн 11-мӗшӗнче нимӗҫсене сывлӑшри ҫапӑҫусенче 13 самолет персе ӳкернӗ тата аэродромсем ҫинче 4 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗтӗмпе ҫав кун противникӑн 17 самолет пӗтернӗ. Пирӗн 8 самолет пӗтнӗ.

* * *

Февралӗн 11-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен 6 танкне, 3 орудине, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 225 лавне, зенитнӑй пулеметсен 2 точкине пӗтерсе тӑкнӑ тата сиен кӳнӗ, чугунҫул ҫинчи пӗр эшелона вут тивертсе янӑ, чугунҫул ҫинчи 13 вагона тата 2 цистернӑна ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, противник пехотин 3 батальонне саласа янӑ тата пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Лиец командир пулса ертсе пыракан часри юланутҫӑ-гвардеецсем (Хӗвеланӑҫ фрончӗ) противникӑн вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ районне пырса кӗнӗ те, тӑшманӑн темиҫе блиндажне йышӑнса илсе, унӑн 4 орудине тата 4 пулеметне тытса илнӗ.

Фронтӑн тепӗр участокӗнче Степанов юлташ ертсе пыракан боецсем нимӗҫсене халӑх пурӑнакан 2 пунктран хӗссе кӑларнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 130 ҫын вилнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан 2 пункта йышӑнса илнӗ. Халӑх пурӑнакан пӗр пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫура противник 2 батальона тата 20 танка кӗртсе ярса, пирӗн чаҫсем ҫине контратака тума хӑтланса пӑхнӑ, анчах та противника пысӑк ҫухатусем кӳрсе унӑн контратакине сирсе янӑ. Пирӗн войскӑсем 12 оруди, 12 миномет, 59 автомашина, боеприпассем тиенӗ 43 лав тытса илнӗ тата 3 танка пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем 1000 ҫынна яхӑн вилсе юлнӑ.

* * *

Погожин лейтенантӑн подразделенийӗнчи йӗлтӗрҫӗ-красноармеецсем тӑшманӑн чакса пыракан чаҫӗн тылне кӗрсе кайнӑ та унӑн чакмалли ҫулне пӳлсе хунӑ. Ҫавӑрса илнӗ вырӑнтан тухма нимӗҫсем темиҫе хут та хӑтланса пӑхнӑ, анчах вӗсен хӑтланӑвӗсем ӑнӑҫсӑр пулнӑ. Хаюллӑ йӗлтӗрҫӗсем тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна ытла вӗлернӗ. Нимӗҫсен пысӑк ушкӑнӗ тыткӑна паранӑ.

* * *

М. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячӗ, Сталино облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекенскер, итальянецсен пехотин подразделенийӗ ҫине засадӑран пеме тытӑннӑ. Ҫапӑҫу хирне 20 виле пӑрахса хӑварса, оккупантсем тарнӑ. Партизансем 15 винтовка, пӗр пулемет тата 1000 ытла патрон тытса илнӗ. Тепӗр темиҫе кунтан ҫав отрядри боецсем итальянецсен обозӗ ҫине гранатӑсем пӑрахнӑ та боеприпассем тиенӗ 6 лаша пӗтерсе тӑкнӑ. Итальянецсен 12 салтакӗ вилнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 291-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 506-мӗш полкӗн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Альфред Фортанц ҫапла каласа панӑ: «Нимӗҫ войскисем каялла чакнӑ май пур ҫӗрте те хӑраса ӳкни палӑрать, йӗркесӗрлӗх пуҫ пулса тӑрать. Приказсем пӗр-пӗрне хирӗҫлеҫҫӗ, командирсем ним тума та пӗлмеҫҫӗ. Пирӗн полк пӗрмаях ҫапӑҫура пулчӗ. Эпир юн юхтарса пӗтетпӗр. Октябрь уйӑхӗнчен пуҫласа пирӗн ротӑна темиҫе хутчен те ҫынсем хушса пачӗҫ, рота 250 ҫын ҫухатрӗ. Салтаксем «хейматшусс» — «тӑван ҫӗршыва персе яни», тепӗр майлӑ каласан, ҫӑмӑл суран илме ӗмӗтленеҫҫӗ. Салтаксем 6-мӗш рота командирӗ лейтенант Кау сӑмахӗсене пӗр-пӗрне каласа параҫҫӗ; Кау лейтенант майора ҫапла каланӑ: «Ҫакӑн пек ҫухатусем тунӑ чухне вӑрҫни усӑсӑр», тенӗ.

* * *

Нимӗҫсен 100-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 369-мӗш полкӗнчи 4-мӗш ротӑран Кӑнтӑр фронтӗнче тыткӑна лекнӗ фельдфебель Иоганн Маленица ҫапла кӑтартса панӑ: «369-мӗш полк ҫамрӑк хорватсенчен тӑрать, вӗсене Хорватири тата Германири гитлеровецсем вӑйпа ирӗксӗрлесе мобилизациленӗ. Полкри ҫынсен шучӗ вӑл ҫапӑҫава кӗриччченех ӗнтӗ нумай чакрӗ. Салтаксем нумайӑшӗ хӑйсен аллисемпе урисене тӑм илтерсе янӑ. 4-мӗш ротӑра 202 ҫынран 110 ҫын кӑна тӑрса юлнӑ. Хорватсем нимӗҫсемшӗн юн юхтарасшӑн мар. Пирӗн ротӑран 20 ҫын тарчӗҫ те ӗнтӗ».

* * *

Можайск районӗнчи халӗ нимӗҫсенчен ирӗке кӑларнӑ Борисово ялӗнчи колхозниксем фашистла оккупантсен тискер ӗҫӗсем ҫинчен акт ҫырнӑ: гитлеровецсем 23 колхознике тата ялти 58 ҫулти врача С. А. Припускова персе вӗлернӗ. Персе вӗлернӗ ҫынсем хушшинче: колхоз председателӗ 60 ҫулти Н. П. Перфильев тата унӑн 15 ҫулти ывӑлӗ Виктор, 62 ҫулти почтальон И. Д. Шурупов, 70 ҫулти колхозник С. К. Потков, 60 ҫулти инвалид Н. И. Новоселов тата ытти ватӑ граждансем пулнӑ.

* * *

Хеймница хулинче тата районӗнче (Германия) пир-авӑр тӗртекен фабрикӑсенче ӗҫ вӑйӗ ҫитмен пирки ачасен ӗҫӗпе анлӑн усӑ курма тытӑннӑ. Предприятисен хуҫисем 11—13 ҫулти ачасене кашни кунах 12-шер сехет ӗҫлеттереҫҫӗ.

Февралӗн 13-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 13-мӗш ҫӗрӗн тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем, нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ ҫапӑҫса, наступлени туса пынӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн кавалери чаҫӗ нимӗҫсене вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ районран хӑваласа кӑларнӑ тата 6 пулемет, 8 автомат, ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшалсемпе снаряженисем нумай тытса илнӗ.

Фронтӑн тепӗр участокӗнче Кузнецов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть тӑшман полкӗн контратакине сирсе пӑрахнӑ тата нимӗҫсен йывӑр танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсен 200 ытла вилли выртса юлнӑ.

* * *

Калинин фрончӗн уйрӑм участокӗсенче пирӗн чаҫсем пӗр кун хушшинче халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑннӑ тата тӑшманӑнне 280 автомашина, боеприпассем нумай тытса илнӗ, нимӗҫсенне 10 пулемет тата темиҫе оруди пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 1.000 ҫын ытла пӗтнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн уйрӑм участокӗсенче кӗрешекен пирӗн чаҫсем пӗр кун хушшинче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 1.200 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Свиридов командирӑн чаҫӗсем, нимӗҫсене атакӑласа, 26 ДЗОТ, 3 наблюдательнӑй пункт, минометсен батарейисене хӳтӗлемелли 5 вырӑна, 30 блиндаж ҫӗмӗрнӗ, 18 оруди, 26 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ тата трофейӑсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Красноармеец Хромченко юлташӑн миномет расчечӗ тӑшманӑн каялла чакакан автоколонни ҫине пеме тытӑннӑ та боеприпассемпе продовольстви тиенӗ 6 грузовика тата штаб автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Харьков облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен С. юлташӑн партизанла отрячӗ противник йышӑнса илнӗ ял ҫине пырса тапӑннӑ. Партизансем пырса тапӑнни гитлеровецсемшӗн пачах та кӗтмен ҫӗртен пулнӑ, вӗсем хӗҫпӑшал тытма та ӗлкӗреймен. Партизансем 40 салтакпа офицера персе вӗлернӗ. Ҫав отрядах нимӗҫсен чаҫӗсемпе штабӗсем хушшинчи телефон линине нумай вырӑнта татнӑ тата нимӗҫ салтакӗсем ларса пыракан 2 автомашинӑна взрыв туса сирпӗнтернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 298-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 526-мӗш полкӗнчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Герберт Грант ҫапла каласа панӑ: «Декабрь уйӑхӗнчех 526-мӗш полкӑн мӗнпур личнӑй составне 2 батальона пӗрлештернӗ. Вырӑссен Кӑнтӑр фронтӗнчи юлашки наступленийӗ вӑхӑтӗнче полковой артиллерин 11 орудийӗ, танксене хирӗҫ пемелли 11 оруди тата пулеметсемпе минометсем нумай пӗтрӗҫ».

* * *

Нимӗҫсен 298-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 21-мӗш танковӑй полкӗн 9-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Эммануил Шмидт ҫапла каласа панӑ: «Волоколамскпа Руза хушшинчи ҫул ҫинче эпӗ нимӗҫ салтакӗсем 15 красноармееца вӗлернине куртӑм. Ҫав красноармеецсем юлашки ҫапӑҫусенче аманнӑ пулнӑ. Вӗсем питӗ вӑрахӑн утса пыратчӗҫ. Вара тыткӑна илнисене хуралласа пыракан нимӗҫ салтакӗсем вӗсене персе вӗлерчӗҫ».

* * *

Полтава облаҫӗнчи Гадяч тата Зеньково хулисенче нимӗҫсем советӑн 280 ҫыннине асаплантарса вӗлернӗ. Гитлеровецсем вилесене шӑтӑксене тултарнӑ. Ҫавӑнтах чӗрӗ ачасене те пӑрахса, вӗсене вилнӗ амӑшӗ-амӑшӗсемпе пӗрле тӑпрапа витсе лартнӑ.

* * *

Сокольнӑй рудникӗнчи (Хӗвелтухӑҫ Казахстан) бурильщик В. И. Деменчук смени задание 4.714 процент тултарнӑ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тăшман танкĕсене пĕтерекенсем

КАНТАР ФРОНЧĔ, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Пирĕн çарăн танксене хирĕç кĕрешекен истребителĕсем тăшманăн хăрушă вăй пулса тăчĕç. Совет истребителĕсем тăшманăн броньăллă вăйĕсене хирĕç хăюллăн тăрса çапăçаççĕ. Истребительсем хастаррăн çапăçни пирĕн войскăсене пĕрре кăна мар çĕнтерӳсем тума пулăшнă. Танксене хирĕç кĕрешекен группăсене чи хăюллă та маттур çынсенчен, çапăçура хăйсен пултарулăхне кăтартнă боецсенчен тунă. Çакăн пек истребительсем пирĕн отечественнăй аслă вăрçăн историне сахал мар чаплă страницăсем çырса хăвараççĕ.

Халăх пуранакан пĕр пункт патĕнче çапăçнă чухне противник пирĕн позицисене 50 танкпала атакăланă. Анчах та кунти истребительсем—Корнилов, Богданов, Еременко тата ытти юлташсем танксенчен хăраса ӳкмен. Истребительсем танксене иртерсе янă та, вĕсем хыççăн пыракан пехотăна танксенчен уйăрса, ăна пулемет вут-хĕмĕпе çунтарма тытăннă. Çакăн хыççăн вĕсем пехотăсăр тăрса юлнă танксене тапăннă. Çакăнта тăшманăн 15 танкне, 2 бронемашинине тата темиçе автомашинине çĕмĕрсе тăкнă. Ытти танксем каялла çаврăнса тарнă.

Тепĕр çапăçура пирĕн войскăсен чаçне противникăн 100 танкĕ тухса атакăланă. Атака пĕр сехет ытлараха пынă. Противникăн танкĕсем хăюллă истребительсем кĕрсе ларнă окопсемпе хушăксем тăрăх темиçе хутчен те вăркăна-вăркăна тухнă. Нимĕçсем пуринчен ытларах Рожков юлташ комсорг пулса тăракан ротăн участокне хаяррăн тапăнса атакăланă. Ку рубеж çине, пирĕн фронта татма ĕмĕтленсе, противникăн 40 танкĕ пырса кĕнĕ. Анчах та кунта 17 танк çухатнă хыççăн фашистсен пирĕн фронта татмалли хăйсен планне ирĕксĕрех пăрахмалла пулнă. Жуковский, Лущенко, Памфилов, Серов, Чербатриев комсомолецсем тăшманăн 30 танкне хирĕç хăюллăн çапăçма тытăннă. Вĕсен çумĕнче кашниннех 10-шар граната та вут хыптаракан шĕвек тултарнă 10-шар бутылка пулнă. Истребительсем 6 танка персе çĕмĕрнĕ, ыттисем каялла çаврăнса тарнă.

Пĕр çапăçура сержант Наседкин комсомолец, гранатăсен çыххипе персе, противникăн танкне çĕмĕрнĕ те, ун çине хăпарса кайса, танк люкĕнчен пере-пере унăн экипажне пĕтерсе тăкнă.

Н-ски дивизири минометнăй ротăн истребителĕсем тăшманăн 38 танкне çапса аркатнă.

Тыткăна лекнĕ красноармеецсене гитлеровецсем Норвегире тискер кайăкла асаплантарни

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене тытса усрамалли Барду сывăхĕнчи Сетермоун ялĕнчи (Норвеги) лагерьте нимĕçсем красноармеецсене тискер кайăкла асаплантарни çинчен кунта çĕнĕ сведенисем илнĕ. Тыткăна лекнĕ красноармеецсене лагере илсе пынă чухне вĕсем лайăх тумланнă пулнă. Тепĕр кунне вĕсене аттисемпе ăшă тумтирĕсене хывса илнĕ. Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене тăпра урайлă лаша витисене хупса лартнă. Курнă çынсем каласа панă тăрăх, тепĕр икĕ эрнерен тыткăна лекнисем выçăхса халран кайнипе палламалла мар улшăннă. Тыткăна лекнисене вăрман касма çĕрте е çĕр чавнă çĕрте талăкне 12—14-шер сехет ĕçлеттереççĕ пулин те, нимĕн те тенĕ пекех çитермеççĕ. Вĕсен кĕпе-тумтирĕсем çĕтĕлсе пĕтнĕ, çара ура çине тăхăннă йывăç пушмаксем ăшне юр кĕрсе тулса çавтери пысăк асап курет. Тыткăна лекнисенчен хăшпĕрисем урисене хăйсен кĕпе-тумтирĕнчен татса илнĕ çĕтĕк-çурăкпа чăрканă, анчах тăм илессинчен ку та çăлса хăвараймасть. Тыткăна лекнисене час-часах вĕлермеллех тăм илсе ярать.

Красноармеецсенчен гитлеровецсем пур майсемпе те мăшкăллаççĕ. Пĕринче, 35 градуслă сивĕ вăхăтĕнче, советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене автомобильсем çине вĕтĕ чул тиеме янă. Вĕсем машина пырасса ултă сехет ытла кĕтсе тăнă. Нумайĕшĕсен урисене тăм илсе янă, теприсем халран кайнипе юр çинех тĕршĕнсе аннă. Тыткăна лекнисем ĕçрен таврăннă чухне вĕсенчен нумайĕшĕсем юлташĕсен хулпуççийĕсем çине сĕвĕнсе пынине курма пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем халран кайнипе утайман пулнă. Нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем кая юлаканнисене прикладпа хĕнеççĕ, штыкпа чикеççĕ. Çĕре ӳкнĕ çăкăр татăкне илме тăнă пĕр красноармееца нимĕçсем штыкпа чиксе пăрахнă, теприне нимĕçсем темиçе километр чуптарнă та унтан, прикладпа хĕненĕ хыççăн, персе пăрахнă.

Норвеги халăхĕ советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем çине питĕ ăшă кăмăлпа пăхать. Пĕр хĕрарăма тыткăна лекнĕ красноармееца темиçе сухари пама тăнăшăн тĕрмене хупса лартнă. 10 çулти хĕрачана красноармеецсене çăкăр панăшăн çĕрлене тĕттĕм те сивĕ барака хупса лартнă. Пĕринче советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене хупса усрамалли барак патне пĕр арçын ача пынă та тыткăна лекнисене апат панă. Гитлеровецсем ачана тытнă. Суд ăна пĕр çул хушши тĕрмене хупмалла тунă.

Вильям Гаррисон Стэндли господина Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи посолĕ туса хунă

ВАШИНГТОН, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ господин Рузвельт Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи посолĕ пулма отставкăна тухнă адмирала Вильям Гаррисон Стэндлине лартни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Çак поста йышăнса тăнă господин Лоуренс Штейнгардта Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Турцири посолĕ пулма лартнă.

* * *

Господин Стэндли 1872 çулта Калифорнире çуралнă. 1895 çулта тинĕс-çар училищинчен вĕренсе тухнă та 1897 çулта кĕçĕн лейтенант чинне илнĕ. Ун хыççăн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар флотĕнче 40 çул хушши тăтăшах ĕçленĕ. 1919 çулта вăл «Вирджиния» линкорăн командирĕ пулнă, 1921—23 çулсенче линейнăй флот командованийĕн штаб начальникĕн помощникĕ пулнă, 1926 çулта «Калифорния» линкорăн командирĕ пулнă, 1927 çулта контр-адмирал чинне илнĕ те тинĕс кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен отдела ертсе пынă, 1928 çулта ăна главнăй тинĕс штаб начальникĕн помощникĕ туса хунă, 1930—33 çулсенче малтан эсминецсен флотилин командующийĕ, унтан, вице-адмирал чинне илсен, крейсерсен отрячĕн командующийĕ пулнă, 1933 çултан пуçласа 1937 çулччен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен главнăй тинĕс штаб начальникĕн постне йышăнса тăнă.

Господин Стэндли 1934 çулта Лондонра тинĕс вăйĕсене хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе пухăннă конференцире Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацийĕн членĕ пулнă, Лондонри тинĕс договорĕ çине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ячĕпе алă пуснă. Господин Стэндли 1941 çулти сентябрь уйăхĕнче Мускавра пулса иртнĕ СССР, США тата Великобритани представителĕсен канашлăвĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацин составĕнче пулнă. Нумаях пулмасть господин Стэндли Америкăн Пĕрлешӳллĕ Штатсен Пирл-Харборти тинĕс-çар бази çине Япони мĕнле майпа пырса тапăннине тĕпчесе пĕлме Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ официальнăй йĕркепе уйăрнă комиссин членĕ пулнă.

Тĕл перекен чаплă артиллеристсем

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Фашистсене хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче Н-ски соединени чаçĕсенче тупăсенчен çавтери тĕл перекен артиллеристсен чаплă кадрĕсем ӳссе çитĕнчĕç. Вĕсем нимĕç оккупанчĕсен пуçĕсем çине кăнтăрла та, çĕрле те татти-сыптисĕр металл тăкаççĕ, тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене татса, унăн техникипе чĕрĕ вăйĕсене пĕтереççĕ. Юлашки çапăçусенчен пĕринче кĕçĕн лейтенант Копейка ертсе пыракан батарея тăшманăн 8 танкне хирĕç çапăçма пуçланă; çак танксем хыççăн противникăн 35—40 таран автомашини пынă. Икĕ сехет çапăçнă хыççăн пирĕн артиллеристсем 2 танка çĕмĕрнĕ, ыттисем каялла çаврăнса тарнă. Юлашки кунсенче çак батарея тăшманăн 3 танкне, 4 минометне, 3 автомашинине тата 9 огневой точкине çĕмĕрсе тăкнă. Оруди расчечĕн командирĕ сержант Лосев, хăйĕн орудине уçă позицие кăларнă та, тӳррĕн тĕллесе персе, нимĕçсен çар грузĕсем тиенĕ 3 автомашинине тата боеприпассен 2 складне аркатса тăкнă. Зуев командирăн орудийĕсем снайперла тĕл переççĕ. Юлашки вăхăтра вăл тĕл пенипе тăшманăн лармалли площадкăри пĕр самолетне тата грузсем тиенĕ 10 лавне аркатса тăкнă.

Артиллери подразделенийĕн командирĕ Баринов юлташ тăшманăн тĕплĕн маскировка туса пытарнă ДЗОТ-не асăрханă. Вăл туппа хăвăртрах уçă позицие кăларса лартма хушнă. Тупăран пенĕ малтанхи снаряд укреплени çывăхнех ӳксе çуралнă, иккĕмĕшпе виççĕмĕш снарядсем тӳрех тăшман ДЗОТ-ĕн амбразурине лексе çуралнă. Унтан орудирен нимĕçсем вырнаçса ларнă çурт çине пеме тытăннă. Темиçе секундăранах снарядсем çак çурт çине те тĕлех пыра-пыра ӳкнĕ. ДЗОТ-ра тата çуртра вырнаçса тăнă фашистсем пĕр çын юлмичченех вилсе пĕтнĕ. Çак операцисене туса ирттерессин мĕнпурĕ те пĕр минута ытлараха çеç пынă.

Вуникĕ боец нимĕçсен пĕр ротин атакине сирсе янă

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Голованов лейтенант пуç пулса тăракан 11 боец çине тул çуталас умĕн нимĕçсен роти пырса тапăннă. Нимĕç салтакĕсен автоматсем тата пулеметсем пулнă. Вĕсем хăйсем çухатнă рубежа каялла йышăнса илме шутланă. Совет боецĕсем сахаллăн пулнине кура, нимĕçсем вăйлăн персе, сĕмсĕрленсех малалла пынă. Голованов лейтенант, хăйсен лару-тăрăвĕ йывăррине шута илсе, боецсене çирĕппĕн тăма чĕннĕ. «Юлташсем! Эпир питех те сахаллăн, тăшман вăйĕ, хăварах куратăр, пирĕннинчен темиçе хут та ытларах. Çапах та пирĕн рубежран темĕн пулсан та чакмалла мар, е пурте пĕрлех пĕр çын юлмиччен вилĕмĕр», тенĕ вăл.

«Вилĕпĕр, анчах та чакмастпăр», тенĕ боецсем пурте пĕр сасăпа. Фашистсен чаçĕсем пирĕн рубеж патне çывăхарах та çывăхарах çитсе пынă. Пирĕн боецсемпе вĕсен хушшинче 150 метртан ытла мар тăрса юлнă. Çак самантра лейтенант «Огонь!» тесе команда панă. Пирĕн рубеж патне çитесси темиçе утăм çеç юлнă. Фашистсене сасартăк совет боецĕсем перекен вăйлă вут-хĕм пырса çапнă. Вĕсен речĕсем тӳсеймен, арканса, каялла çаврăнса тарнă. Голованов боецĕсем тăшманăн атаки хыççăн 28 виле выртса юлнине шутласа кăларнă тата нумай хĕçпăшал пуçтарса илнĕ. Хăйне панă боевой приказа вĕсем чыслăн пурнăçа кĕртнĕ.

Фашистла бандитсен ури айĕнче Украина çĕрĕ çунать

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Украина çĕршывне нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен пусăм хыççăн пусăм ирĕке кăларса пыраççĕ. Ĕнер çеç кунта нимĕçсем хуçаланнă. Пур çĕрте те вĕсем туса хăварнă ирсĕр те юнлă ĕçсен йĕрĕсем курăнаççĕ: совет çыннисен асаплантарса, персе пăрахнă виллисем, çунса кайнă, ялкăшса çунакан çуртсем, хресченсенчен çаратса тухнă пурлăхсем тиенĕ машинăсемпе лавсем. Гитлерла бандитсене çаратнă пурлăхĕсем те кирлĕ пулман пулас. Вĕсен хăйсен пуçĕсене çăлмалла пулнă. Анчах та пуçмăрçăсемпе çаратуçăсен нумайĕшĕсен хăйсен пуçĕсене те çăлса тухма май килмен. Çулсем çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен çĕршер виллисем, орудийĕсем, миномечĕсем, автомачĕсем, боеприпасĕсем йăваланса выртаççĕ. Çак трофейĕсене пурне те пухаççĕ те шута илеççĕ.

Пирĕн боецсем К. ялне пырса кĕнĕ чухне кас пула пуçланă. Ĕнер çеç ку ял кăмăла савăнтаракан хăвасла ял пулнă. Кун пек ялсене Харьковщинăра сахал мар тĕл пулма пулать. Халĕ ĕнтĕ унта юр пек шурă çуртсем вырăнне — кăмрăкпа кĕл купи, йывăç сачĕсем вырăнне — çунса хуралса кайнă йывăçсем.

Халĕ пушарсене сӳнтерсе пĕтермен-ха, вырăнĕ-вырăнĕпе халĕ те çулăм ялкăшать-ха. Хресченсене пулăшас тесе, боецсем витресемпе шыв çĕклеççĕ, танкистсемпе трактористсем колхозниксене пурлăха вутран çăлма пулăшаççĕ.

Юнашарах нимĕçсен икĕ автоматчикне илсе пыраççĕ. Вĕсене тин çеç колхоз клубĕн чердакĕ çинче тытнă. Ирсĕр бандитсене татăкăн-татăкăн вакласа тăкма хатĕр тăракан халăха тытса чарас тесе, боецсем çине тăрсах тăрăшаççĕ.

— Вĕсем мĕн чухлĕ халăха вĕлерсе пĕтерниччен пĕтĕм тĕнче тĕлĕнĕ, — тет 75 çулти колхозник Иван Дмитриевич Семиволос.

Боецсем вăл каласа панине итлеççĕ. Ăна илтсен пĕтĕм çан-çурăм сăрлатса каять. Çак пĕчĕк ялта çеç гитлерла ирсĕрсем старикĕсене, хĕрарăмсемпе ача-пăчасене 200 çынна нимĕн айăпсăрах персе пăрахнă. 50 çулти Максим Калядăна нимĕçсем вăл çăлтан шыв ăснă чухне персе пăрахнă. 75 çулти Григорий Олейника нимĕçсем унăн ывăлĕсем Хĕрлĕ Çарта пулнăшăн персе пăрахнă.

Пĕр ирсĕр фашист вырăнти фельдшерăн Егор Павлович Петровăн йыттине персе пăрахма тăнă. Старик, йыттăма ан вĕлерĕр, тесе тархасланă. Нимĕç ахăлтатса кулса янă та, иккĕмĕш пульăпа Егор Павлович Петрова персе пăрахнă. Пăшал сассине илтсе, Петровăн ывăлĕ Виктор тухнă. Нимĕç ăна та персе пăрахнă. Петровсен кӳрши — Егор Шулика — хăйне хăй тытса тăма пултарайман, хăйĕн тарăхăвне каласа панă та, нимĕç бандичĕ ăна та çав самантрах персе пăрахнă. Ялтан васкаса тухса тарнă чухне Хĕрлĕ Çар пырса çапнине пула шăртланса кайнă нимĕçсем урамра тĕл пулнă çынсене пурне те пере-пере пăрахнă.

Украинăри ĕççыннисем фашистсен тискерлĕхне ĕмĕрне те манас çук. Манас та çук, каçарас та çук!

Нимĕçсене малалла хăваласа пыракан боецсене ăсатса янă чухне К. ялĕнчи çынсем пăлханнипе чĕтрекен сасăпа çапла калаççĕ:

— Вĕсене сывлăш çавăрма ан парăр, хăвалăр вĕсене!

Çак сăмахсем боецсене Хĕвеланăç чĕнелле, ылханлă тăшмана хирĕç çĕнĕрен çĕнĕ çапăçусем патнелле хăвăртрах утма хавхалантараççĕ.

З. ЛИПАВСКИЙ.

Гитлерла ирсĕрсен Латвири тискерлĕхĕсем

НЬЮ-ИОРК, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Вашингтонран çапла пĕлтереççĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаменчĕ нимĕçсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенче иртĕнсе кайса тискер ĕçсем туни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе кăтартса паракан материалсем илнĕ. Çав документсенчен пĕринчен акă мĕн лайăх курăнса тăрать: Латвире гитлеровецсем икĕ ялта пĕтĕм халăха арестленĕ. Вĕсене ак мĕншĕн айăпланă: унта çĕр алтса пытарнă темиçе красноармеец виллисене тупнă. Вара арестленĕ халăхран 300 çынна январĕн 1-мĕшĕнче персе вĕлернĕ.

Гитлеровецсем Украина хресченĕсен çĕрĕсене нимĕç помещикĕсене параççĕ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). «Кракауэр цейтунг» хаçат çапла çырать: Совет Украинин Германия оккупациленĕ хĕвеланăçĕнчи облаçĕсенче нимĕçсем 570 шултра имени туса хунă. Çав иленисенчен нумайĕшĕсене нимĕç помещикĕсене панă.

Фашистсем Украина хресченĕсенчен тырпулла выльăх-чĕрлĕх туртса илсе, вĕсене нимĕç помещикĕсене сутаççĕ.

Нимĕçсен Польшăри колонизаторĕсем намăса пĕлмесĕр йышăнни

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен Польшăри оккупациллĕ влаçĕсен «Остдейчер беобахтер» хаçачĕ çапла пĕлтерет: Гитлерăн Познаньри наместникĕ Грейзер гитлерла парти членĕсен пухăвĕнче Познаньре нимĕçсем тума йышăннă черетлĕ мероприятисем çинчен сăмах тухса каланă. Гитлерăн сатрапĕ намăса пĕлмесĕрех çапла каланă: «Польша рабочийĕсем нимĕçсене питех те пăхăнман пирки, влаçсен час-часах хĕçпăшалпа усă курма тивет. Польша хресченĕсем хăйсен тырпулне парасшăн мар пулчĕç, çавăнпа та кунта та хаяр мерăсем йышăнма лекрĕ». Иртĕхсе кайнă гитлеровец малалла çапла каланă: «Польша халăхĕн политикăллă пурнăçĕ пĕтсе ларнă ĕнтĕ. Поляксем ĕнтĕ нимĕçсемпĕн урăх нимĕн те мар, ĕç вăйĕ çеç пулса тăраççĕ. Поляксем тĕлĕшпе эпир ку таранччен мĕн туса пынисем ача вăййи çеç пулса тăраççĕ». Грейзер Польша халăхне малашне те хĕсĕрлесе, вĕлерсе пыма чĕннĕ. «Эпир йышăннă мероприятисен тĕллевĕ, — тенĕ вăл, — нимĕçсене пурнăç прависем туса парас тĕлĕшпе пурнăçа кĕртсе пыракан мероприятисем çеç пулса тăнине манма кирлĕ мар. Çак правăсем яланах тата пур çĕрте те малти вырăнта тăраççĕ. Çакна ăнланма килĕшмен çынсене эпир сирсе пырăпăр».

Нимĕçсен хаçачĕ «Франкфуртер цейтунг» пĕлтернĕ тăрăх, Германин ĕç фрончĕ текен организацин представителĕ Дерихсвейлер нумаях та пулмасть Познаньри промышленность предприятийĕсенче пулнă. Кунта вăл çав предприятисенче стачкăсемпе пăлхавсем пулнă пирки килнĕ. Çав предприятисенчен пĕринче Дерихсвейлер сăмах тухса каланă. «Кашни нимĕçĕн поляк çине нимĕн хĕрхенӳсĕр пăхмалла. Поляксемпе Германин вăрçă ĕçĕсенче май килнĕ таранах туллинрех усă курмалла», тенĕ вăл хăйĕн сăмахĕнче.

Гитлерăн Данцигри наместникĕ Форстер нумаях пулмасть статья пичетлесе кăларнă. «Провинцири мĕнпур халăх нимĕçсенчен тăракан пуличчен эпир ку провинцие Германия çĕнтерсе илнĕ тесе шутлама пултараймастпăр», тесе çырнă вăл хăйĕн статьинче. Форстер çапла кăтартса панă: нимĕçлетессине хирĕç тăракан Польша интеллигенцине халĕ ĕнтĕ «сиенсĕрлетнĕ», урăхла каласан, вĕлерсе пĕтернĕ. Провинцие нимĕçлетессине хирĕç тăракан поляксене,—тесе хăратса палăртнă Форстер,—«кăтартуллăн наказани парĕç».

Болгари влаçĕсен террорĕ

СТАМБУЛ, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Болгарири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Пловдиври военнăй суд Карлово хулинчи 21 çыннăн ĕçне пăхса тухнă. Çав çынсене «правительство политикине хирĕç кĕрешнĕшĕн» тесе айăпланă. Вĕсенчен тăваттăшне çакса вĕлермелле, иккĕшне 15-шер çуллăха тĕрмене хупмалла приговор йышăннă. Ыттисене тĕрлĕ сроклăха, 2 çултан пуçласа 12 çул çурă таран, тĕрмене хупмалла тата 40 пин левран пуçласа 200 пин лев таран штраф тӳлеттермелле суд тунă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Пловдивра виçĕ хресчене, хăйсен çĕрне акса хăварманшăн пысăк штраф тӳлеттермелле суд тунă.

Шишманово ялĕнчи хресчене Шеко Господинова хăйĕн тырпулне туртса илнине хирĕç тăнăшăн 10 çуллăха тĕрмене хупмалла тата 100 пин лев штраф тӳлеттермелле суд тунă.

Ксантири военно-полевой суд Ксанти хулинчи виçĕ çынна, «правительствăна хирĕçле пĕлтерӳсем сарнăшăн» кашниннех 10-шар çуллăха тĕрмене хупмалла тата 75-шер пин лев штраф тӳлеттермелле приговор йышăннă.

Финсен фашистла хаçачĕ уççăнах каласа пани

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Финсен фашистла хаçачĕсем юлашки вăхăтра Хельсинкире «паллă мар салтакăн» памятникне лартас тĕлĕшпе питĕ анлă пропаганда сараççĕ. Çарăн шухăш-кăмăлне кăшт та пулин хăпартас тесе, кун пирки питĕ нумай статьясем çыраççĕ. Анчах та çав пропагандăн результачĕсем пачах урăхла пулса пыраççĕ. Финсен фронтра тухса тăракан «Ватенбрудерн» хаçачĕ те хăйĕн çиллине пытараймасăрах уççăн çапла çырнă: «Вăрмансенче çапăçакан финн салтакĕ хăйне столицăри монументран чылай ытларах кирлĕ темĕн чухлĕ япала ыйтма пултарать. Ăна ăшă тумтир, урана тăхăнмаллисем кирлĕ. Государство монументсемпе мар, салтак çемьипе интересленсе ăна пулăшу парсан салтак хăйне хăй темиçе хут лайăхрах туйнă пулĕччĕ».

Гитлерăн Венгрири лакейĕ

ЖЕНЕВА, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Женеври журналистсем хушшинче ак мĕн çинчен асăрхаттараççĕ: Венгрин премьер-министрĕ Бардоши çак кунсенче Будапештра аслă шкулсенче вĕренекенсем умĕнче сăмах тухса каланă. Вăл тухса калани — пĕтĕмпех хăраса ӳкнĕ çын сăмахĕ. Вăл кăшкăра-кăшкăра çапла каланă: «Хамăр çĕршыва çăлса хăварма» халĕ кашни венгерăн тем чухлĕ пысăк йывăрлăхсем тӳсмелле, тенĕ. Бардоши тискеррĕн кăшкăрса фронта пулăшма чĕннĕ, «шалти йĕркесене» пăсакансене темĕнле айăпласипе хăратнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар ĕç министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Батаан çурутравĕ çинче вăрçă операцийĕсен активлăхĕ чакнă. Япони авиацийĕ вăйлăнах тапăнни палăрмасть. Японецсем çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англи командованийĕн коммюникинче çапла каланă: Сингапур утравĕ çинче Япони войскисем Сингапур хули çине хĕвеланăç енчен наступлени туса пыраççĕ. Хăшпĕр участоксенче японецсем Англи оборонин зони ăшне шала кĕрсе кайма пултарнă. Çĕр çинчи войскисене танксем, çавăн пекех тата авиаци те пулăшса пырать. Хĕвеланăç секторĕнче Англи войскисен кăштах чакма тивнĕ. Япони самолечĕсем çинчен Англин Сингапур утравĕ çинчи командованине парăнма чĕнекен листовкăсем пăрахнă. Англи командованийĕ çавна хирĕç ответлемен. Хĕвеланăç тата Çурçĕр-Хĕвеланăç секторĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Япони войскисене çапăçура çăмăл тата вăтам танксем нумайăн пулăшса пыраççĕ.

Февралĕн 11-мĕшĕнче каçхине Мартабанран çурçĕр-хĕвеланăçнерех Япони войскисем анса юлнă. Хулана японецсем йышăнса илнĕ пулмалла, тесе шутлаççĕ. Паан районĕнче февралĕн 11-мĕшĕнче вăйлă çапăçусем пынă. Кунта Япони войскисем, пысăк вăйсем ярса, Салвин юханшывĕ урлă каçма хăтланнă. Англи войскисем çавна хирĕç контрнаступлени пуçланă. Кунта лару-тăру питĕ йывăр пулсассăн та, пуçарулăх Англи войскисен аллинче, тесе шутлаççĕ.

Япони авиацийĕ вăйлăн çапăçни палăрать. Пикировка тăвакан бомбардировщиксем Англи войскисен позицийĕсене атакăлаççĕ тата пулеметсенчен персе тăраççĕ. Китайăн Бирмăри войскисем февралĕн 10-мĕшĕнче Индо-Китайра Таи войскисене хирĕç çапăçма пуçланă. Таи войскисем кунта пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ пĕлтернинче Япони авиацийĕ Голланди Индийĕн районĕсем тĕлĕнче разведкăлă вĕçевсем ирттерни çинчен палăртнă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Японин официальнăй сведенийĕсем тăрăх, Япони войскисем Салвин юханшывĕн хĕвеланăç енче Мартабан хулине йышăнса илнĕ. Борнео утравĕн Голландие тивекен хĕвелтухăç енчи пайĕнче Япони войскисем Бенджермасин хулине йышăнса илнĕ.

Сингапурта японецсен пысăк вăйĕсем, авиаци пулăшса пынипе, утравăн вăта çĕрти пайĕнче икĕ водохранилище районĕнче Англи войскисен позицийĕсем çине наступлени пуçласа янă. Япони войскисем ĕнер Букит-Тимах высота енчен англичансен оборонăллă районне хĕсĕнсе кĕнĕ.

Китайри вăрçă

Аньхуэй провинцин çурçĕр пайĕнче Китай войскисем, японецсен икĕ пине çити салтакран тăракан группин атакине сирсе пăрахса, виçĕ кун каярах японецсем йышăнса илнĕ Мынчэн хулине Китай войскисем каялла туртса илнĕ. Çапăçусенче японецсен пысăк çухатусем пулнă.

Сингапурти лару-тăру

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Сингапур утравĕ çинче ĕнер ирхине питĕ хаяр çапăçусем пулса пынă. Японецсем кăнтăр еннелле, хула патнелле, куçма хăтланнине Англи войскисем питĕ хаяррăн хирĕç тăрса кĕтсе илеççĕ. Сингапур утравĕ çине японецсем виçĕ дивизие яхăн илсе пынă пулмалла. Февралĕн 11-мĕшĕнче японецсем утрав çине çĕнĕрен бомбăсем пăрахма тытăннă. Япони самолечĕсем англичансен малти позицийĕсене, чугун çул станцине тата порта атакăлаççĕ. Англи артиллерийĕ вĕсем çине питĕ вăйлăн персе тăрать.

Паллах ĕнтĕ, утраври лару-тăру питĕ хăрушă; çав крепоçшăн пыракан çапăçусем çитес çывăх кунсенчех вĕçленеççĕ пулмалла. Англипе Голланди Индийĕн тинĕс-çар флочĕ, çавнашкалах суту-илӳ суднисем те, типçĕр çинчен те, сывлăшран та тăтăшах тапăннин хăрушлăхне, подводнăй лодкăсем тапăннин хăрушлăхне пăхмасăрах, май килнĕ таран васкаса хĕрарăмсемпе ача-пăчасене эвакуацилеççĕ. Батавирен илнĕ сведенисем тăрăх, Сингапурти тинĕс базинчи пур сооруженийĕсемпе склачĕсене те, противник аллине хăварас мар тесе, сирпĕнтерсе янă.

Англи авиацийĕ Германи çине тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Германин хĕвеланăç пайĕнчи тĕрлĕ объектсем çине, çав шутрах Берлинпа Мангейм çине те бомбăсем пăрахнă. Çавнашкалах тата Брестпа Гавр докĕсем çине те пырса тапăннă.

Германи самолечĕсем çĕр каçиччен Англин Çурçĕр-Хĕвеланăç сыранĕнчи пунктсенчен пĕрин çине бомбăсем пăрахнă. Пурăнмалли темиçе çурта сиен кӳнĕ.

Пĕлтерӳ

Февралĕн 16-мĕшĕнче, 6 сехетре каçхине, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпунктĕнче докладчиксем, агитколлектив руководителĕсемпе агитаторсем валли «Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарни тата нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкас задача» темăпа инструкциллĕ доклад пулать.

Докладчикĕ — МЕЛАМЕДОВ юлташ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпункчĕ.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн 37(6062)-мĕш №-чи 2-мĕш страницăри (В. Таврин юлташ статьинчи) 2-мĕш колонкăри çӳлтен 5—8-мĕш йĕркесене çапла тӳрлетсе вуламалла: «Çапла, сăмахран, Калинински районра январь уйăхĕн юлашки виç-тăват кунĕ хушшинче вăрçă налогне срокченех 117 пин тенкĕ тӳленĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Строительству требуются для работы в Чебоксарах:
секретарь-машинистка, плотники, столяры, маляры, штукатуры, каменщики, бетонщики, печники, арматурщики, кровельщики, землекопы, кузнецы, шофера, подсобные рабочие, сторожа, курьеры.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица К. Маркса, дом № 80, контрольная будка, с 2 час. дня до 7 час вечера.
3—1 Администрация.

Чувашпромсоюзу
ТРЕБУЮТСЯ:
секретарь-машинистка и завхоз.
АДРЕС: Чебоксары, ул. Ленина, дом № 6, телефон № 0-49.
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăла партин пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин 0—23.

НТ 375 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф: 6. 58 64 п: л: